27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ОКТЯБРЬ 27 ЭРНЕКУН 212(6707) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем паян, октябрĕн 25-мĕшĕнче, САТУ-МАРЕ хулипе КАРЕЙ хулине — тăшманăн Çурçĕр Трансильванири оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене — штурмласа туртса илнĕ. Çапла вара, пирĕн çарсем ТРАНСИЛЬВАНИЕ тăшмантан пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă.

САТУ-МАРЕ хулипе КАРЕЙ хулине туртса илессишĕн тата ТРАНСИЛЬВАНИЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенантăн, ТРОФИМЕНКО генерал-полковникăн, МЕРКУЛОВ генерал-майорăн, ПЕТРУШЕВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОРЯЧЕВ генерал-лейтенантăн, ТИМОШКОВ генерал-майорăн, УМАНСКИЙ генерал-майорăн, КОЗЫРЬ генерал-майорăн, БЕЛОДЕД полковникăн, БОЧКОВ полковникăн, КИНДЮХИН генерал-майорăн, КОНЕВ генерал-майорăн, КАРЛОВ генерал-майорăн, ХОХЛОВ полковникăн, КОСТРЫКИН полковникăн, АБРАМОВ полковникăн, КОРНАЧЕВ полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, САЖИН полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ФОМИНАН, артиллери генерал-майорĕн КАРЕЦКИН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ПОПОВИЧАН артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн БАРАУСОВАН, СТЫЗИК полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ГОРЮНОВАН, авиаци генерал-лейтенанчĕн СТЕПИЧЕВАН, авиаци генерал-майорĕн КАМАНИНАН, САПРЫКИН полковникăн, КЛОБУКОВ полковникăн, СЕМЕНЕНКО полковникăн, ИЩЕНКО подполковникăн, КОРЯКОВ подполковникăн, БЕРМАН подполковникăн, КИРЕЕВ майорăн, ЛЬВОВСКИЙ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ЦИРЛИНАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ПЕТРОВАН, ПОНИМАШ полковникăн, БУДАРИН полковникăн, ПАВЛЕНКО полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ЛЕОНОВАН, ГОРЕЛКИН полковникăн, АГАФОНОВ полковникăн, КАРПОВ полковникăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, САТУ-МАРЕ хулипе КАРЕЙ хулине туртса илессишĕн тата ТРАНСИЛЬВАНИЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ТРАНСИЛЬВАНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 25-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, САТУ-МАРЕПЕ КАРЕЙ хулисене туртса илнĕскерсене тата ТРАНСИЛЬВАНИЕ ирĕке кăларнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ТРАНСИЛЬВАНИЕ ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ПЕТРОВА

УКРАИНАРИ 4-мĕш фронт çарĕсем паян, октябрĕн 26-мĕшĕнче, Чехословаки республикин территорийĕнче Карпат леш енчи Украинăн промышленность центрне МУКАЧЕВО хулине — çулйĕрсен паха узелне тата Карпат тăвĕсен кăнтăр енчи противник оборонин тĕреклетнĕ пунктне — туртса илнĕ.

МУКАЧЕВО хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне ЖУРАВЛЕВ генерал-лейтенантăн, ГАСТИЛОВИЧ генерал-майорăн, ДУДАРЕВ генерал-майорăн, МЕЛЬНИКОВ генерал-майорăн, ТИТЕНКО полковникăн, ЧЕРНЫЙ полковникăн, АКУЛОВ полковникăн, ПОДОПРИГОРА подполковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн, АНКУДИНОВ майорăн, ЧЕПУРКО капитанăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КАРИОФИЛЛИН, ЯКОВЛЕВ полковникăн, БОГАТЫРЕВ полковникăн, ШАРАПОВ полковникăн, ПАРНОВСКИЙ полковникăн, НЮХАЛОВ подполковникăн, ТЕРЕХИН подполковникăн, КОДЯКОВ майорăн, ЖУЙКО майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн СОЛОВЬЕВАН, СЕРОВ полковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖДАНОВАН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОЛЕСНИКОВАН, БАРАШ полковникăн, СТОНОГ полковникăн, БУХАРЕВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн МАТВЕЕВАН, КОРОТКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, МУКАЧЕВО хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «МУКАЧЕВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 26-мĕшĕнче, 21 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 4-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, МУКАЧЕВО хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, МУКАЧЕВО хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çĕрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МЕРЕЦКОВА

КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем, нимĕç çарĕсене хăваласа пырса, НОРВЕГИН государство чикки урлă каçнă та, Заполярьери йывăр условисенче çапăçса, паян, октябрĕн 25-мĕшĕнче, КИРКЕНЕС хулине — Баренц тинĕсĕнчи паха порта туртса илнĕ.

КИРКЕНЕС хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ЩЕРБАКОВ генерал-лейтенантăн, АБСАЛЯМОВ генерал-майорăн, НИКУЛЬСКИЙ генерал-майорăн, КОРОТКОВ генерал-майорăн, ЖУКОВ генерал-майорăн, СОЛОВЬЕВ полковникăн, ГРЕБЕНКИН полковникăн, ПАНИН генерал-майорăн, КАВЕРИН полковникăн, КОЩИЕНКО полковникăн, ЛЫСЕНКО полковникăн, КАЛИНОВСКИЙ полковникăн, ХУДАЛОВ генерал-майорăн, БЛАК полковникăн, АМВРОСОВ полковникăн, СОПЕНКО генерал-майорăн, СТАРЦЕВ полковникăн, НИКАНДРОВ полковникăн, ЕВМЕНОВ подполковникăн, КРЫЛОВ полковникăн, РАССОХИН полковникăн, ЦЫПЫШЕВ подполковникăн, ПИДУСТ подполковникăн, ПАСЬКО майорăн, ЛАЗАРЕВ подполковникăн, ЧЕРНЕВСКИЙ подполковникăн, ПОВАРЕНКО подполковникăн, КОПЫЛА подполковникăн çарĕсем; 1-мĕш рангри капитанăн КУЗЬМИНАН, 1-мĕш рангри капитанăн КЛЕВЕНСКИН, 2-мĕш рангри капитанăн КОРШУНОВИЧАН, 3-мĕш рангри капитанăн ЗЮЗИНАН морякĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн ДЕГТЯРЕВАН, артиллери генерал-майорĕн ПАНИТКИНАН, ЯРОСЛАВЦЕВ полковникăн, ГРИГОРЬЕВ полковникăн, БАНДЮКЕВИЧ полковникăн, МАНЯКИН полковникăн, ЛИХУТ полковникăн, ХРАМОВ полковникăн, ГОЛДЫХОВ подполковникăн, ФЕТИСОВ подполковникăн, ЕРЕСЬКО подполковникăн, ШАПИРО подполковникăн, ШЕПЕЛЬ подполковникăн, ЗУБАРЕВ подполковникăн, КРИВОШЕЕВ подполковникăн, ГОЛУБЕВ майорăн, ЕДЕНСКИЙ майорăн, ВАКУРОВ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КОНОНОВАН, СОКОЛОВ подполковникăн, ЮРЕНКОВ полковникăн, СУЧКОВ подполковникăн, ЛЕЩЕНКО подполковникăн, КОРШУНОВ подполковникăн, ТЕРЕНТЬЕВ подполковникăн, ТАРЧИЛИН подполковникăн, АРШИНЕЦКИЙ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн СОКОЛОВАН, авиаци генерал-майорĕн ПРЕОБРАЖЕНСКИН, УДОНИН полковникăн, ЛАРЮШКИН полковникăн, ФЕНОГЕНОВ полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, МИНАЕВ полковникăн, ПУШКАРЕВ полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ХРЕНОВАН, ЛЕЙЧИК полковникăн, АРШБА полковникăн, ЗАХАРОВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ДОБЫКИНАН, ЕКИМОВ полковникăн, государство хăрушсăрлăх майорĕн ГАВРИЛОВАН связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, КИРКЕНЕС хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «КИРКЕНЕССКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 25-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, КАРЕЛИ фрончĕн паттăр çарĕсене, КИРКЕНЕС хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, КИРКЕНЕС хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи октябрĕн 25-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 25-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фрончĕн çарĕсем, нимĕç çарĕсене хăваласа пырса, НОРВЕГИН государство чикки урлă каçнă та Заполярьери йывăр условисенче октябрĕн 25-мĕшĕнче Баренц тинĕсĕ хĕрринчи паха порта — КИРКЕНЕС хулине туртса илнĕ. Çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, НОРВЕГИ çĕрĕнче халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КРОФТФЕТЕРБУКТ, СТУРБУКТ, НАРДФЬЕРБОТН, РОПЭЛЬДЕН, ЯКОБСНЭС, ЭЛЬВЕНЭС, ВЬЕРКХЕЙМ, ХЕБУКТЕН, САНДИЕС, БЬЕРНЕВАНД, ЛОНГФЬОРДБОТН, НИГОРД, ФОССГОРД, ЛАНГЛИ, СВАНВИК.

ЛИБАВА хули енче пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен темиçе хутчен тунă атакисене сирсе янă, тăшманăн çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ.

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса, нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ чылай пункчĕсене туртса илнĕ, вăл шутра БАЛЬДЕН, ПЕТЕРАЙЧЕН, ВИЛЬНИШЕН, ДРУСКЕН, БАРАЙШКЕМЕН, ЛАВИШКЕМЕН, ПАБАЛЛЕН, ГРОССТРАКЕНЕН, МАТЦУКЕМЕН, АЙЗЕНХЮЦТЕН, ГРОСС ТРАКИШКЕН, ШУЙКЕН, КЛАЙНКУММЕТШЕН.

Варшавăпа юнашар ларакан ПРАГАРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсене хирĕç поляксен пĕрремĕш çарĕн чăçĕсемпе пĕрле çапăçнă, ЛАЙСКИ, ВЕЛИШОВО, ВЕНГЕРСКИЕ-КОНТЫ, РЕМБЕЛЬШИЗНА, РУЖОПОЛЕ, ХОЩУЛКА, ДУМБРОВКА, ПЛУДЫ, ГЕНРЫКУВ, ТАРХОМИН, ЖЕРАНЬ ялĕсене туртса илнĕ.

Чехословаки çĕрĕнче МУКАЧЕВО хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн инженери чăрмавĕсене çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — МЗВОР, ОЛЕНЕВО, СОЛОЧИН, ПАСИКИ (МУКАЧЕВО хулинчен 14 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре), ДУСИНА, ДОВГЕ, ВЕЛИКИЙ ПРАГОВЕЦ, РОКОСОВ ятлă пысăк ялсем тата НЭЛИПИНО, ДОВГЕ, ЗАДНЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем октябрĕн 25-мĕшĕнче тăшман оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене тата Çурçĕр Трансильванири пысăк чугун çул узелĕсене САТУ-МАРЕ хулипе КАРЕЙ хулине штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра БАТАРЧИ, ХАЛМЕУ, ТУРУЛУНГ, АГРИС, ПЕЛИШОР, ЛАЗУРЬ, ОСВАРЕУ, ВЕТИШ, ДАРА, СЕТМЭРЕЛ, ГИЛЬВАЧИ, КЕМИН, УРЗИЧЕНЬ, СТАНИСЛЭУ ятлă пысăк ялсем тата ХАЛМЕУ, МИКУЛА, ОСВАРЕУ, ЛАЗУРЬ, СЭТМЕЛЕЛ, ГИЛЬВАЧИ, СТАНИСЛЭУ ятлă чугун çул станцийĕсем. Çапла вара, пирĕн çарсем ТРАНСИЛЬВАНИЕ тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатса çитернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Октябрĕн 24-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 112 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 67 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ЛИБАВА, ВИНДАВА ПОРЧĔСЕНЕ ТАТА ХĔВЕЛТУХĂÇ ПРУССИРИ ИНСТЕРБУРГ, ДАРКЕМЕН ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛĔСЕНЕ ТАПАННИ

Октябрĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Либавăпа Виндава порчĕсене тата Хĕвелтухăç Пруссири Инстербургпа Даркемен чугун çул узелĕсене тапăннă.

Либава портне тапăннă вăхăтра унта нимĕçсен темиçе транспорчĕ тăнă. Бомбăсем пăрахнине пула, 14 пушар тухнă. Уйрăмах вăйлă пушарсем портăн хĕвелтухăç пайĕнче, ангарсемпе вокзал районĕнче пулнă. Портра 5 взрыв пулнă, вĕсенчен пĕр взрывĕ питĕ вăйлă пулнă.

Виндава портĕнче, бомбăсем пăрахнине пула, темиçе пушар тухнă. Пушарсенче взрывсем пулнă.

Инстербургпа Даркемен чугун çул узелĕсенче бомбăсем тăшман эшелонĕсем хушшинче çурăла-çурăла кайнă. Даркемента, бомбăсем тӳрех пырса тивнипе, боеприпас эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. Чугун çул узелĕн пысăк пайне вут ярса илнĕ.

☆ ☆ ☆

Карели фрончĕн çарĕсем, нимĕç çарĕсене хăваласа пырса, Совет Союзĕпе Норвегин государство чикки урлă каçса кайнă. Совет чăçĕсем, тăшманпа çапăçса, 20 километр малалла кайнă та паян Киркенес хулине туртса илнĕ. Унта тăшман оборонăра тăма лайăх позицисем йышăнса тăнă. Унăн сулахайри флангне Ярфьорден заливĕ хӳтĕлесе тăнă. Киркенес хулине пырса кĕмелли çулсене унти паха çӳллĕ вырăнсем çинче тунă укрепленисем пӳлсе тăнă. Пирĕн чăçсем тăшман кĕтмен çĕртен залив урлă каçнă та нимĕçсене флангран çав тери хăвăрт пырса çапнă. Тăшманăн аркатса тăкнă чăçĕсене хăваласа пырса, совет çарĕсем Киркенес хулипе портне туртса илнĕ. Киркенес вăл нимĕçсен Заполярьери тĕп транспорт тата тинĕç çар бази пулнă.

Никель поселокĕнчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чăçĕсем, малалла куçса пырса, нимĕçсен аэродромне йышăннă. 8 самолет, 3 йывăр тупă, авиаци мастерскойне, 200 пичке бензин, авиаци бомбисен складне, инженери пурлăхĕн складне тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Тăшман хытă хирĕç тăрать, темĕн пек пысăк çухатусем тӳсет пулин те, контратакăсене хăйĕн пехотипе танкĕсен çĕнĕ те çĕнĕ вăйĕсене кĕртсе ярать. Пирĕн артиллеристсемпе пехотинецсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. 2.500 нимĕçе çити вĕлерсе тăкнă. Нимĕçсен 48 танкĕпе 16 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем вăйлă çирĕплетнĕ темиçе яла туртса илнĕ.

Нимĕçсене шоссе çулĕсен узелĕ пулса тăракан Гросс Тракенен ятлă пунктран хăваласа кăларнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче кун каçиччен нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Прагăран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсемпе поляксен пĕрремĕш çарĕн чăçĕсем тăшмана сасартăк атакăланă. Совет боецĕсем нимĕçсем тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та вĕсене вăйлă çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем темиçе ял туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман виллисем нумай выртса юлнă. 10 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, çавăн пекех тата 40 хир туппи пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 3 танк, хăй тĕллĕн çӳрекен 2 тупă, 14 хир туппи, 70 автомашина тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 18 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Чехословаки çĕрĕнче Мукачево хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Поляна ялĕ районĕнче тăшман пирĕн наступлени туса пыракан çарсене хирĕç хытă тăнă. Çак ял ту çинчи улăхра, шоссе çулĕсем темиçе еннелле пуçланса каякан тĕлте ларать. Нимĕçсем çул çумĕнчи тусем çинче çирĕпленсе ларнă та хăйсен позицийĕсем патне пымалли вырăнсене тĕл персе тăнă. Тусем çинчи утма çулсемпе куçса пырса, совет боецĕсем тăшман тылне тухнă та Свалава ятлă пысăк ялпа чугун çул станцине штурмласа туртса илнĕ. Унтан, çурçĕрелле пăрăнса кайса, пирĕн подразделенисем тăшманăн Поляна ялĕнчи гарнизонне тылран атакăланă. Пирĕн ытти чăçсем тăшмана фронтран пырса çапнă. Ту çинчи улăхра хĕстерсе лартнă гитлеровецсем кăнтăралла татса тухма хăтланнă, анчах та вĕсене аркатса тăкнă. 2.000 нимĕçпе венгера ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем Трансильванири тусем çинчи районсенче тăшмана аркатса тăкнă та, тӳрем вырăна анса, Сату-Маре хулипе Карей хулишĕн çапăçма пуçланă. Енер совет пехотинецĕсем Сату-Маре хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Нимĕçсемпе венгерсем хулари чул çуртсенче çирĕпленсе ларнă та хытă хирĕç тăнă. Пирĕн штурмлакан отрядсене тупăсем парса вăйлăлатнă, вара çав отрядсем тăшман хирĕç тăракан вырăнсене пĕрин хыççăн теприне пусара-пусара лартнă. Паян пирĕн çарсем Сату-Маре хулине штурмласа туртса илнĕ. Тăшманăн хулари гарнизонĕн пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ, тыткăна та нумай илнĕ. Сату-Маре хули çулйĕрсен паха узелĕ пулса тăрать. Ку хулана 4 чугун çул тата 5 шоссе çулĕ пырса кĕреççĕ. Пирĕн ытти чăçсем Карей хулипе пысăк чугун çул узелне йышăннă. Сату-Маре хулипе Карей хулине йышăнса, совет çарĕсем Трансильванине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатса çитернĕ.

* * *

Çурçĕр флочĕн карапĕсем тăшманăн икĕ транспортне тата хуралти карапне шыва путарнă.

Шурă тинĕс флотилийĕн карапĕсемпе самолетсем нимĕçсен подводнăй лодкине путарнă.

ВКП(б) Обкомĕнче

Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем, обязательнăй йĕркепе памалли планран иртттерсе, государствăна Хĕрлĕ Çар фончĕ валли çĕрулми хушса пама йышăннă. Çак пуçарăва ВКП(б) Обкомĕ ырланă.

ВКП(б) Обкомĕ парти райкомĕсене çак патриотла пуçару хамăрăн государствăн оборона вăй-хăватне çирĕплетес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен колхозниксене анлăн ăнлантарса пама, Çĕрпӳ районĕнчи колхозсем чĕнсе каланине колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явма, çапла вара республикăри колхозсемпе колхозниксем çак ĕçе активлăн хутшăнмалла тума хушнă.

Хĕрлĕ Çар фондне планран иртттерсе çĕрулми тата пахча-çимĕç парас ĕçе организацилер!

Çĕрпӳ районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем илнĕ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕМ

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем, мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçа кĕртессишĕн тата планран иртттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă парассишĕн Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнтăмăр. Илнĕ обязательствăсене эпир чыслăн пурнăçа кĕртрĕмĕр: октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне район тырпул хатĕрлемелли çулталăкри плана тултарчĕ тата планран иртттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 36 пин пăт ытла тырă пачĕ, çавăн пекех тата государствăна çĕрулми памалли плана та тултарчĕ.

Районри колхозсем кăçал вăйлă тулă çĕрулми тата пахча-çимĕç туса илнĕ. Хĕрлĕ Çара тата çĕршыва тырпул памăр, çĕрулмипе пахча-çимĕç те кирлине эпир пĕлетпĕр. Çавăнпа та эпир планран иртттерсе Хĕрлĕ Çар фондне май пур таран ытларах çĕрулмипе пахча-çимĕç пама кирлĕ тесе шутлатпăр.

Ярославль облаçĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем чĕнсе каланине йышăнса, эпир колхозсемпе колхозниксен харпăрхăйĕн запасĕнчен 1944 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне — Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 27 çул тултарнă тĕле — планран иртттерсе 37 пин пăт çĕрулми тата пахча-çимĕç пама йышăнтăмăр.

Пирĕн районри «Новая жизнь» колхоз çĕрулмипе пахча-çимĕç планран иртттерсе 1830 пăт, «Ĕмĕт» колхоз — 1220 пăт, «Пионер» колхоз 1350 пăт пама йышăнчĕç. «Чуваш. ЦИК» колхоз 1220 пăт пама пулса, çав çĕрулмие пĕтĕмпех хатĕрлев пунктне леçсе пачĕ те ĕнтĕ. «Новая жизнь» колхозри Федор Романов, Иван Черняев тата Михаил Спиридонов хăйсен запасĕнчен 30-шар пăт çĕрулми пачĕç. Пирĕн районри нумай колхозниксемпе колхозницăсем харпăрхăй запасĕнчен 20—30-шар пăт çĕрулмипе пахча-çимĕç параççĕ.

Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене эпир çĕрулмипе пахча-çимĕç хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн социализмлă ăмăрту сарса яма, çавăн пекех тата планран иртттерсе Хĕрлĕ Çар фондне çĕрулмипе пахча-çимĕç пама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр Çĕнтерӳ Маршалĕ аслă Сталин!

(Обязательствăна колхоз председателĕсен районри пухăвĕнче тата колхозниксен пухăвĕсенче йышăннă).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессине пухасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VIII-мĕш Сессине 1944 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1944 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕ.

РОСТСЕЛЬМАШ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕМ ТУМА ПУÇЛАНĂ

Дон çинчи Ростовра Ростсельмаш заводĕнчи чи пысăк цехсенчен пĕрне—тырă вырса пухакан машинăсен цехне—юсаса хута янă. Оборудовани вырнаçтарса лартса, цех ялхуçалăх машинисем валли питĕ кирлĕ запаслă пайсене тума пуçланă. Запаслă пайсен пĕр ушкăнне Туркменипе Крыма ăсатнă ĕнтĕ.

Цехра тырă вырса çыхса пыракан машинăсене (сноповязалкăсене) пухса майлаштарма тытăннă. Çав машинăсене завод кăçалах нумай туса кăларать. (ТАСС).

ССР Союзĕпе Итали хушшинче дипломатиллĕ тулли çыхăнусем йĕркелесе ярасси çинчен

...ябрĕн 25-мĕшĕнче Совет Правитель... Итали Правительстви çумĕнчи ...авителĕ М. А. Костылев Италин ...ршыв ĕçĕсен Министрне Совет ...тельстви Италипе дипломатиллĕ тулли çыхăнусем йĕркелесе яма йышăнни çинчен пĕлтернĕ:

Совет Правительстви, ССР Союзĕн Италири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Послĕ пулмашкăн М. А. Костылева уйăрса лартма Итали Правительствинчен килĕшӳ ыйтнă.

СССР НАРКОМИНДЕЛĔН ИНФОРМАЦИ БЮРОВĔ.

Укçапа япаласен лотерея билечĕсене сарасси республикăри пур предприятисемпе учрежденисенче те тата колхозсенче те пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать

Лотерея билечĕсене Елчĕк районĕнчи „Марс" колхоз председателĕ А. Гаязов, „МОПР" колхоз председателĕ А. Евстихеева, Октябрьски районри Наратчакки ялĕнчи колхоз председателĕ П. Сергеева, Эльменкассинчи колхоз председателĕ Кузнецова, Шăхасан районĕнчи Çĕнĕ Пинер ялĕнчи колхоз председателĕ К. Викторов юлташсем 5.000-шер тенкĕлĕх туяннă

Малтанхи кун итогĕсем

Октябрĕн 25-мĕшĕнче республикăри пур предприятисемпе учрежденисенче те тата колхозсенче укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене сарас ĕç пуçланчĕ. Билетсене сарасси пысăк çĕкленӳпе, иртнĕ çулхинчен лайăхрах, иртсе пырать. Иртнĕ çулта пĕр кун хушшинче 18.855 пин тенкĕлĕх сарса, билет укçине 11.128 пин тенкĕ пухнă пулсан, кăçал 4-мĕш лотерея билечĕсене малтанхи кунах 27.314 пин тенкĕлĕх сарнă. Вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 4.006 пин тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 22.408 пин тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Билет укçине пухасси те чылай районсенче ăнăçлă пырать. Пĕр кун хушшинче пурĕ 12.751 пин тенкĕ пухса, перекет кассисене хывнă.

Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе Октябрьски, Вăрмар, Канаш районĕсем, Шупашкарпа Канаш хулисем малта пыраççĕ.

Çак вăхăтрах хăшпĕр районсенче, ĕçе кирлĕ пек организацилеменнине пула, лотерея билечĕсене сарасси тата билет укçине пухасси сӳрĕк пырать-ха. Уйрăмах Кувакино, Шăмăршă, Первомайски, Улатăр, Калинино, Элĕк, Сĕнтĕр районĕсем кая юлса пыраççĕ.

Асăннă районсенчи финанс работникĕсен тата партипе совет организацийĕсен лотерея билечĕсене сарас ĕçе хăвăртлатмалла.

А. МИХАЙЛОВ,
Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисемпе государство кредичĕн управленин начальникĕ.

Лотерея билечĕсене нумай пин тенкĕлĕх туяннă колхозниксем

Укçапа япаласен тăваттăмĕш лотерейин билечĕсене туянса панă укçа-тенкĕ мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн хăватне ӳстерме, çĕнтерӳ сехетне çывхартма пулăшать. Çавăнпа ĕнтĕ ĕççыннисем лотерея билечĕсене хапăлласах туянаççĕ. Республикăри чылай колхозниксем, лотерея билечĕсене нумай пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине те çийĕнчех тӳлеççĕ.

Октябрьски районри Наратчакки колхозĕн председателĕ П. Сергеева юлташ лотерея билечĕсене 5000 тенкĕлĕх, çав районри Эльменкасси колхозĕн председателĕ 5000 тенкĕлĕх, Елчĕк районĕнчи «МОПР» колхозăн председателĕ А. Евстихеева 5000 тенкĕлĕх, Шăхасан районĕнчи Çĕнĕ Пинер колхозăн председателĕ К. Викторов юлташ 5000 тенкĕлĕх çырăнса, укçине çийĕнчех тӳленĕ.

Çавăн пекех Октябрьски районри Эльменкасси колхоз счетоводĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ И. Смирнов лотерея билечĕсене 3000 тенкĕлĕх, Тăвай районĕнчи Мушар колхозĕн председателĕ М. Веселов 3000 тенкĕлĕх, çав колхозăн счетоводĕ Александров 2000 тенкĕлĕх туяннă. Лотерея билечĕсене пиншер тенкĕлĕх е ытларах çырăнакансен хисепĕ пысăк.

Государствăна çитес çулшăн аш-какай параççĕ

ЕТЕРНЕ. Районри нумай колхозсем государствăна аш-какай памалли плана тултарса пыраççĕ. Пăчăнкере «Победăпа» колхоз 1944—1945 çулсенче аш-какай парса татнă, çитес 1946 çулшăн 5 центнер панă. Çавăн пекех, кăçалхи плана тултарса, çитес çулшăн Полянка колхозĕ 41 центнер, Анат Мучар колхозĕ 25 центнер, Мăн Рĕкет колхозĕ 20 центнер аш-какай панă.

В. ЛАЗАРЕВ.

Республика столицинче

Шупашкарти предприятисемпе учрежденисенче тата çывăхри колхозсенче лотерея билечĕсене пĕр кун хушшинчех 1.538 пин тенкĕлĕх сарнă. Ку хисеп сарма палăртнă висерен ытларах шутланать. Лотерея билечĕн укçине 152 пин тенкĕ пухса, перекет кассисене хывнă.

Лотерея билечĕсене чăлха фабрикинче, хула çывăхĕнчи колхозсенче, табак фабрикинче, Осоавиахимăн Центральнăй Советĕнче тата ытти чылай предприятисемпе учрежденисенче ăнăçлăн сарнă. Чăлха фабрикинчи кашни рабочи билет туяннă, билет укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă. «Максим Горький» колхоз членĕсем 30 пин тенкĕлĕх, «Красная Волга» колхоз членĕсем 26 пин тенкĕлĕх, «Социализм» колхоз членĕсем 42.100 тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех тӳленĕ. Табак фабрикин коллективĕ лотерея билечĕсене илме уйăхри ĕç укçин 30,3 процентĕ чухлĕ, Мельтрест коллективĕ 32 процент чухлĕ, Росснабсбыт коллективĕ 57 процент чухлĕ çырăннă. Осоавиахимăн Центральнăй Советĕнчи нумай работниксем уйăхри ĕç укçин 30 процентĕ чухлĕ е ытларах çырăнса илнĕ.

Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе урам комитечĕсем хушшинче Приятелев, Талдыкина, Смирнова, Миронова, Яблонко юлташсем малта пыраççĕ. Вĕсем билетсене сарнипе пĕрлех укçине те пухаççĕ.

Пĕр кун хушшинче 700 пин тенкĕлĕх

МУРКАШ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Колхозсемпе учрежденисенче лотерея билечĕсене сарасси пысăк çĕкленӳпе иртсе пырать. Билетсем сарас ĕç пуçланнă кун 700 пин тенкĕлĕх сарнă, укçине 600 пин тенкĕ çийĕнчех хывнă.

Лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе Хăймалакасси ялсоветĕнчи колхозсем малта пыраççĕ. Жданов ячĕпе тăракан колхозра 30 пин тенкĕлĕх, «Хăймала» колхозра 17 пин, «Аврора» колхозра 14 пин, «Эльмен» колхозра 10 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçине пĕтĕмпех тӳленĕ. Атабай ялсоветĕнчи «Крестьянин» тата «Красное знамя» колхозсен членĕсем 25-шер пин, Свердлов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 31 пин тенкĕлĕх çырăнса, укçа тӳленĕ.

Т. ИВАНОВ.

Çĕнтерӳ сехетне çывхартма

КАНАШ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Хулари предприятисемпе районри колхозсенче 4-мĕш лотерея билечĕсене сарас ĕç хĕрӳллĕ пулса пырать. Канашри предприятисенче лотерея билетне пĕтĕмпе 826 пин тенкĕлĕх сарнă, билет укçине 3 пин тенкĕ пухнă. Районри колхозниксемпе колхозницăсем 4-мĕш лотерея билетне 928 пин тенкĕлĕх ытла илсе укçине те нумай тӳленĕ. Хуларн предприятисемпе районри колхозсенче малтанхи кун лотерея билетне 1.803 тенкĕлĕх сарса, укçине 931 пин тенкĕ пухнă.

«Авангард» артель коллективĕ лотерея сарас ĕçе активлăн хутшăннă — кунта пĕтĕмпе 24 пин тенкĕлĕх сарнă. Атă çĕлекен цехри мастер Жилинкас юлташ ĕçукçин 95 процентĕ чухлĕ, мастер Сапожников 92 процент чухлĕ илнĕ.

Районри «2-ая пятилетка» колхозра та çак ĕç лайăх пулса пырать. Кунта колхоз активĕ пример кăтартать. Колхоз председателĕ Дмитриевпа счетовод Осипов 800-шер тенкĕлĕх тӳлесе илнĕ.

Канашри чиркӳ настоятелĕ священник Дмитрий Каменский лотерея билетне 20 пин тенкĕлĕх илсе, укçине çийĕнчех тӳленĕ.

З. МИТРОФАНОВА.

Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса

ÇĔРПУ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Енер районри пур колхозсенче те тата Çĕрпӳ хулинчи предприятисемпе учрежденисенче пухусем пулса иртрĕç. Рабочисемпе колхозниксем 4-мĕш лотерея билетне сарас ыйтăва пысăк çĕкленӳпе сӳтсе-явнă. Хĕрлĕ Çар тăшмана унăн çĕрĕ çинче аркатса пыни районри ĕççыннисене лотерея билетне сарас ĕçе активлăн хутшăнма хавхалантарать.

Малтанхи кунах районра лотерея билетне пĕтĕмпе 1.084.000 тенкĕлĕх сарнă. Колхозниксем 621.000 тенкĕлĕх илсе, укçине те çийĕнчех тӳленĕ, рабочисемпе служащисем лотерея укçине 11.150 тенкĕ тӳленĕ.

Уйрăмах «1905 год» колхозра лотерея билетне сарасси аван пырать. Кунта колхозниксем лотерея билетне 50.000 тенкĕлĕх илнĕ. «Новая жизнь» колхозра 45.000 тенкĕлĕх, «Кульмет» колхозра 30.000 тенкĕлĕх, «Нива» колхозра 26.000 тенкĕлĕх, «Ударник» колхозра 22.000 тенкĕлĕх сарнă.

Вĕрмер ялсоветĕнчи виçĕ колхоз 105.000 тенкĕлĕх илсе, укçине те çийĕнчех тӳленĕ. «Планета» колхоз членĕ, нумай пулмасть фронтран аманса таврăннă инвалид Павел Кузьмин лотерея билетне 900 тенкĕлĕх илсе, укçине те çийĕнчех тӳленĕ, çак колхоз членĕ Тимофеев 850 тенкĕлĕх илсе, укçине çийĕнчех тӳленĕ. Васильев колхозник та 1000 тенкĕлĕх илсе укçине тӳленĕ. Тăватă фронтовик ашшĕ, 60 çулхи старик А. Егоров лотерея билетне 500 тенкĕлĕх илнĕ.

— Тăшман пуçĕ çине татах та хăватлăрах вутлă çумăр çутарас тесен, паян пирĕн укçа-тенкĕ шеллесе тăмалла мар, — теççĕ колхозниксем.

Халĕ колхозсемпе предприятисенчи комсодсем лотерея билечĕшĕн укçа пухса çитерес тесе тăрăшса ĕçлеççĕ.

В. ЯСТРЕБОВ.

Перекетленĕ укçана—тăван çĕршыва хӳтĕлеме

КУСЛАВККА, октябрĕн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Укçапа япаласен 4-мĕш лотерейин билечĕсене сарасси районри пур колхозсенче те ăнăçлăн пырать. «Красная Чувашия» колхоз колхозникĕсем лотерея билечĕсене 36.500 тенкĕлĕх туянчĕç. Колхоз председателĕ А. Андреев тата колхозник А. Антонов юлташсем 1.500-шер тенкĕлĕх, фермăра ĕçлекен Филипповăпа Архипова юлташсем 1000-шер тенкĕлĕх лотерея билечĕсене туянса, укçине çийĕнчех тӳлерĕç.

Çавăн пекех лотерея билечĕсене сарасси «16-ый партс'езд», «Красный курган» тата ытти колхозсенче те ăнăçлăн пырать. «Красный курган» колхоз членĕсем Л. Чаркина 1200 тенкĕлĕх, Балдина 1.025 тенкĕлĕх, фронтовик арăмĕ, 7 ача амăшĕ Жолобова 950 тенкĕлĕх, 7 ача амăшĕ Ватурина 1000 тенкĕлĕх çырăннă. Вĕсем хăйсем перекетленĕ укçапа лотерея билечĕсене туянса, çĕнтерӳ сехетне çывхартма пулăшаççĕ.

АНИСИМОВ.

2,2 гектар çинче сад-пахчи тунă

Вăрнар районĕнчи Рунгăри «Кĕçĕн Сатаврă» колхоз сад-пахчи тума улмуççи тата ытти тĕрлĕ çырла йывăççисене лартса хăварнă. Пĕтĕмпе 2,2 гектар çине тĕрлĕ йывăç лартнă.

А. ЯХУНИНА.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен докладпа калаçусем ирттермелли план

1. Октябрьти Социализмлă Аслă революцин историри вырăнĕ.
2. Ленинпа Сталин Октябрьти Социализмлă революцин çулпуçĕсемпе организаторĕсем.
3. Октябрьти революци 27 çул тултарнине совет халăхĕ мĕнле лару-тăрура кĕтсе илет.
4. Хĕрлĕ Çарăн кăçалхи аслă çĕнтерĕвĕсем.
5. Ленин—Сталин партийĕ—фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерме совет халăхне организацилекенĕ тата хавхалантараканĕ.
6. Фашистла блок арканса кайни тата Гитлера хирĕçле коалици çирĕпленни.
7. Отечественнăй вăрçăн татăклă тапхăрĕпе пирĕн задачăсем.

ЛИТЕРАТУРА:

1. И. СТАЛИН — Октябрьти революци тата вырăс коммунисчĕсен тактики («Ленинизм ыйтăвĕсем»).
2. И. СТАЛИН — Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен.
3. ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ, VI-мĕшпе VII-мĕш сыпăксем.
4. Вăрçăн виçĕ çулхи итогĕсем (1944 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче тухнă центрти хаçатсем).
5. Хаçатри материалсем (центрти хаçатсем — июлĕн 23, 27, 30-мĕшĕсенче тухнисем; августăн 14, 16, 20, 26-мĕшĕсенче тухнисем; сентябрĕн 3, 6, 7, 11, 13, 14, 16, 18, 20, 21-мĕшĕсенче тухнисем; октябрĕн 5, 11, 12, 21, 24, 25-мĕшĕсенче тухнисем).
6. Совет Информаци Бюровĕ кăçалхи октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа панă пĕлтерӳсем.
7. «Пропагандист», «Большевик» тата «Спутник агитатора» журналсен 1944 çулхи октябрь уйăхĕнче тухнă номерĕсем.

ВКП(б) ОБКОМЕН ПРОПАГАНДАПА АГИТАЦИ ОТДЕЛĔ.

ФЕРМА ХĔЛЕ ХАТĔР

Шăхасан районĕнчи «Трактор» колхозра выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес ыйтăва правлени ларăвĕнче тĕплĕн сӳтсе-явса, конкретлă мерăсем йышăннă. Ферма заведующийĕ Р. Архипов, правлени палăртнă решенисене фермăра ĕçлекен колхозниксене ăнлантарса парса, вĕсене ĕçе мобилизациленĕ. Кăшнинех уйрăм ĕçсем панă.

Ферма заведующийĕ Архипов юлташ хăй вите алăксене юсанă, кантăксене лартнă, уратисене çĕнĕрен тунă, урайсене вырнаçтарнă. Çĕрулми хума пусă хатĕрленĕ, шăвармалли вырăнсене те юсанă.

Фермăра ĕçлекен Г. Васильева, Ф. Осипова, О. Андреева, Р. Павлова, А. Прокопьева колхозницăсем витесен, пӳртсен ăшĕсене тасатса шуратнă, валашкасене çуса тасатнă, дезинфекци тунă. Витесенчи шăтăк-çурăксене măкласа тăмпа шăлнă, тăррисене витнĕ.

Çуллахи вăхăтра фермăра ĕçлекенсем 60 тонна силос хывнă, çулçăсем 50 лав, витаминлă утă 24 лав, арăмути тата вĕлтрен 15 лав хатĕрленĕ. Выльăхсем валли 1250 пăт çĕрулми уйăрса хранилищĕне хывнă. Выльăх апачĕ ытларах пултăр тесе, çĕрулми аврисене 13 лав типĕтсе хунă. Типĕ апатсене пĕçерсе пама 40 витре кĕрекен хуран вырнаçтарса лартнă.

Фермăри колхозниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Кăçал ферма колхоза 20.000 тенкĕ ытла доход парать. Колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх çу, çăм илеççĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз ытлашшипех тултарнă. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем государствăна 1944 çулшăн парса татса, 1945 çулшăн та панă. Аш-какай вара 1946 çулшăн 12 пăт панă.

Фермăна малти вырăнта тата тупăшлă тытса тăрас тесе, колхоз председателĕ П. Евлампьев юлташ та çине тăрса ĕçлет.

А. АНТОНОВ.

Жданов юлташ „Финлянди—Совет Союзĕ" ятлă обществăн президиумĕн членĕсене йышăннă

ХЕЛЬСИНКИ, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 20-мĕшĕнче каçхине союзниксен Контроль комиссийĕн председателĕ генерал-полковник А. А. Жданов, çав Комиссин политика советникĕпе Орловпа пĕрле, «Финлянди — Совет Союзĕ» ятлă обществăн президиумĕн членĕсене йышăннă. Президиум членĕсем çаксем пулнă: государство советникĕ Юхо Паасикиви, доктор Хело, промышленность ыйтăвĕсемпе ĕçлекен советник Сергелиус, доктор Рууту, медицина наукисен кандидачĕ Рюэмя тата редактор Рикк. Паасикиви çав обществăн тĕллевĕсем çинчен тата Финлянди халăхĕн шухăш-кăмăлĕсем çинчен каласа кăтартнă. Жданов юлташ çав общество союзниксен Контроль комиссийĕ умĕнче тăракан ĕçсене пулăшса пыма пулни ăна кăмăла кайни çинчен пĕлтернĕ.

Черчилль Англие таврăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Лондона премьер-министр У. Черчилль çитнĕ, вăл самолетпа вĕçсе пынă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Брескенс хулинчен кăнтăртарахри районра союзниксен çарĕсем, çав вырăна шыв илнĕ пирки тухса тăнă йывăрлăхсене пăхмасăрах, малалла куçса пынă. Антверпен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Розендааль хулипе Антверпен хушшинчи чугун çултан хĕвелтухăçнерехре кăштах малалла куçнă. Вунсдрехт хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Бевланд çурутравне каякан шоссе çулĕпе чугун çула каллех татнă.

Союзниксен çарĕсем Гертогенбош хули патне таччăнах пырса çитнĕ. Ку хуларан кăнтăртарахра союзниксем Сент-Михельсгестель патне пырса тухнă, Богстель хули патне çитесси пĕр миля кăна тăрса юлнă. Аахен хулинчен пуçласа Мозель шывĕн тури тăрăхĕнчи улăхне çитиччен пыракан участокра паллă улшăнусемех пулман. Мезьер-ле-Мец хулинче çапăçусем пыраççĕ. Тăшман хăй аллинче хулан тăваттăмĕш пайне тытса тăрать.

Вогез тăвĕсем çинче союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçнă.

Октябрĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Эссен хулине тапăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ октябрĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Оосбург хулипе Пиндорф хули патне таччăнах пырса çитнĕ. Çавăн пекех тата Вунсдрехт хулинчен кăштах çурçĕрелле тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелле кайнă. Союзниксен çарĕсем тăшманпа Гертогенбош хулипе юнашар ларакан ялсенче çапăçаççĕ. Гертогенбош хулинчен çурçĕрелле тата кăнтăралла каякан шоссе çулĕпе чугун çула татнă.

Аахен хулипе Люневиль хулинчен çурçĕртерехри участокра паллă улшăнусемех пулман.

Мозель шывĕн улăхĕнче çаплах патрульсем кĕрешнĕ.

Баккар хули секторĕнче союзниксем Менармон хулине илнĕ те Эппиналь хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă.

Вогез тăвĕсен районĕнче союзниксен çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Авиаци союзниксен Зейд-Бевеланд çурутравĕ çинче кĕрешекен чăсĕсене пулăшнă тата тăшманăн Голландипе Хĕвеланăç Германири вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, октябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 5-мĕшпе 8-мĕш армисем çĕнĕ çитĕнӳсем тунă. Болонья хулинчен кăнтăртарахра 5-мĕш армин Америка чăсĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Кун каçиччен çапăçнă хыççăн вĕсем çӳллĕ вырăнсем чылай туртса илнĕ. Бельмонте хули тавра çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Адриатика тинĕсĕ хĕрринче Червия хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре 8-мĕш арми чăсĕсем малалла кайнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, ĕнер Германири, Чехословакири тата Çурçĕр Италири вăрçă объекчĕсене тапăннă. Тăшман авиацийĕ çапăçман.

Греци çĕрĕнче союзниксен çарĕсем Ламиа хулине йышăннă.

ЛОНДОН, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ октябрĕн 25-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Грецире союзниксен малти чăсĕсем Домокос хулине кĕнĕ. Нимĕç çарĕсем Волос хулине куçса кайнă. Каялла чакакан нимĕçсене Греци партизанĕсем йывăр çухатусем кӳнĕ. Пирей хулине союзниксен çарĕсен çĕнĕ чăсĕсем пырса аннă.

Италире 5-мĕш арми чăсĕсем тăшмана самаях пысăк çухатусем кӳнĕ. Союзниксем Бель-Монте ятлă çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Монте Гранде ятлă çӳллĕ вырăнтан хĕвелтухăçнерехре 5-мĕш армири Америка чăсĕсем Болонья хулипе Римини хули хушшинчи шоссе çулĕнчен 5 мильăра выртакан пĕр паха çӳллĕ вырăншăн хаяррăн çапăçнă. Сылтăм флангра Монте Спадуро ятлă çӳллĕ вырăна тытса илнĕ.

8-мĕш арми чăсĕсем Савио шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Чезена районĕнче тăшмана тапăнма тунă укрепление нумай аслăлатнă, вара Англи пехоти, танксем пулăшнипе, Бевано шывĕ çине тухнă.

Союзниксен авиацийĕ Болоньяпа Чезена районĕнче çĕр çинчи çарсене вăйлă пулăшса тăнă, çавăн пекех тата тăшманăн Адриатика тинĕсĕнчи суднисене тата Албанипе Югославири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, октябрĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн çĕр çинчи чăсĕсем Лейте утравĕ çинчи пур укрепленисенче те çирĕпленсе ларнă та халь шалалла куçса пыраççĕ (Лейте утравĕ вăл Филиппин утравĕсен вăтаçĕрти пайĕнче ларать). Çухатусем пысăк мар. Америкăн çав утрав çине çарсем антарас ĕçе хутшăннă 600 карапĕнчен тăшман икĕ карапне сиенленĕ. Утрав çине анакан Америка çарĕсене японецсем сахал хирĕç тăраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ Японин 57 суднине путарнă е сиенленĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн Лейте утравĕ çинче çапăçакан çарĕсем çав утрав çинчи тĕп хулана — Таклобан хулине тытса илнĕ. Америка çарĕсем Таклобан аэродромне тата Таклобанран 20 миля кăнтăртарахра ларакан Дулаг ятлă пункта тытса илнĕ. Америка çарĕсем пур секторсенче те вăтамран 4 миля малалла кайнă.

Союзниксен авиацийĕ Японин Филиппин утравĕсем çинчи объекчĕсене атакăланă.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, октябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата паян ирхине самолет-снарядсем каллех Кăнтăр Англи çине вĕçсе пынă.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совечĕн Президиумĕ Совет Союзĕн Уругвайри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ Сергей Алексеевич Орлов, йывăр чирпе выртнă хыççăн, кăçалхи октябрĕн 24-мĕшĕнче Монтевидео хулинче (Уругвай) вилни çинчен хуйхăрса пĕлтерет, унăн çемьине хăй унпа пĕрле хуйхăрни çинчен пĕлтерет.

СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ Совет Союзĕн Уругвайри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланникĕ Сергей Алексеевич Орлов вăхăтсăр вилни çинчен хуйхăрса пĕлтерет, унăн çемьине хăй унпа пĕрле хытă хуйхăрни çинчен пĕлтерет.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Колхоза фронтовик килсен...

Кăçалхи апрель уйăхĕнче колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ Иван Петрович Петрова «Жнейка» колхоз председательне суйларĕç. [illegible] 1943 çулта [illegible] фронтра [illegible] аманнă.

Ку ялта ĕçе юратакан та тӳрĕ кăмăллă колхозниксем, ялхуçалăхĕн пултарулă мастерĕсем сахал мар. Петров юлташ çавсемпе пĕрле ĕçлет те ĕнтĕ. Вĕсемпе канашлать, вĕсене колхозра ертсе пырас ĕçе явăçтарать, вĕсем пулăшса пынипе хуçалăхри ĕçсене организацилет.

Чи малтанах Петров юлташ колхоз хуçалăхне йĕркене кĕртме тытăнать. Колхозри ватă старикĕсем — 71 çулхи Михаил Николаев, Семен Якимов, Яков Николаев чăх-чĕпсем валли вите, ферма работникĕсем валли çĕнĕ пӳрт туса лартнă, сысна ферминчи витесене тĕпренех юсанă. Лаша витисене те ăшă каймалла мар тунă.

Лашасемпе çӳрекенсене удостоверенисем панă. Кӳлмелли хатĕрсене йĕркеленĕ. Хăмăт-ĕнерчĕксем, тилхепе-йĕвенсем, урхалăхсем тата ытти те ытлăн-çитлĕн хатĕрленĕ.

Çав вăхăтран пуçласа правлени колхоз лашисене кам мĕнле пăхнине, вĕсемпе мĕнле усă курнине, кӳлмелли хатĕрсене кам мĕнле тыткаланине тĕрĕслесех тăрать. Лашасене пăхнă çĕрте обезличка пĕтсех пырать. Пĕтĕ кĕсресемпе çăмăл ĕçре çеç усă кураççĕ. Тĕреклĕ лашасене суха тунă çĕрте, начартараххисене сӳре сӳренĕ çĕрте ĕçлеттереççĕ.

Петров юлташ, колхоз председателĕ пулса ĕçлеме тытăнсан, малтанхи кунрах ĕçе организацилес, нормăсене çĕнĕрен пăхса тухас енĕпе ĕçленĕ. Ĕçшĕн тӳлемелли йĕркесене туса хатĕрленĕ, унтан вĕсене колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса çирĕплетнĕ. Хуçалăха тытса пырас ĕçре ĕçлекенсен штатне тата вĕсене ĕçшĕн тӳлессине çĕнĕрен пăхса тухнă.

Пур ĕçе те тĕплĕн, пахалăхлă тума кирли çинчен кашни колхозника ăнлантарса панă. Начар ĕçе пăрахăçланă, айăплисене ĕçкунĕ памасăр, [illegible]



Малтанлăха колхозниксене çĕнĕ йĕркесем йывăр пек туйăннă. Анчах халĕ колхозри йĕркелĕх ӳсни пурне те савăнтарать. Колхоз çураки ĕçне районра чи малтан вĕçленĕ, начар мар тырпул туса илнĕ. Кашни гектартан вăтам шутпа 13-шер центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. Уйрăм участоксенчен ыраш гектартан 18 центнер, вăрлăхлăх вика 14 центнер, урпа 13 центнер тухнă. Колхозра икĕ бригада. Иккĕшĕ те пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхоз кăçалхи çул государствăна тырă парассине сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне, çĕрулми парассине сентябрĕн юлашки кунĕсенче пурнăçланă. Колхозниксем те хăйсем çĕрулмине парса татнă. [illegible] пулсан, 15.000 ĕçкунĕ расходланă. Колхозра тăрăшса ĕçленĕ ватă колхозник Михаил Николаев 300 ĕçкунĕ ытла тунă. Вăл 61 пăт тĕштырă илет. Çавăн пекех 7-мĕш класра вĕренекен Елизавета Андреева 30 пăт, Марфа Семенова 50 пăт, Анна Иванова 60 пăт тырă илеççĕ. Кунсăр пуçне колхозниксем ĕçкунĕ çине çĕрулми, пахча-çимĕçсем чылай илнĕ.

Уйрăм сдельщинăпа ĕçлесси кăçалхи çул колхозниксен тĕп йĕрки пулнă. Колхозниксен пухăвĕнче тырпул пухса кĕртес ĕçĕн планĕсемпе йĕркисене çирĕплетнĕ чухне пĕтĕм тырăсене 21 кунта вырса пĕтерме палăртнă. Тата кашни колхозникĕн уйрăм участоксенче ĕçлемелле пулассине те кăтартса панă.

Кăçалхи ялхуçалăх çулне вĕçлессишĕн колхозниксем нихăçанхинчен те ытларах тăрăшса ĕçленĕ. Колхоз ырашпа çуртырисене планпа пăхниччен виçĕ кун малтан вырса пĕтернĕ. Тырă вырса пынăçемĕн кĕлте кӳрсе тӳрех авăн çапнă. Тырă выракан звеносемпе бригадăсемсĕр пуçне, кĕлте кӳрекен, авăн çапакан тата государствăна тырă паракан бригадăсем ĕçленĕ. Çапла вара кăçал тырпула 9 кунта çапса пĕтернĕ.

— Кăçалхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Эпир Молотов ячĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлетпĕр. Колхозри бригадăсемпе звеносем тата уйрăм колхозниксем хушшинчи ăмăрту та анлăн сарăлса кайрĕ. Бригадирсем П. Ивановпа Иванова (пиччĕшĕпе йăмăкĕ) пĕр-пĕринпе ăмăртрĕç. Иванов, пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ, вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлерĕ, колхозниксене фронтри боецсен паттăр ĕçĕсемпе паллаштарса, хавхалантарса пычĕ. Унăн бригади кашни гектартан ыраш 21 центнер, пĕтĕм тырпулсене гектар пуçне 13,1-шер центнер пуçтарса амбара кĕртрĕ, —çапла, колхозниксен ĕçне пысăка хурса хаклаcа, каласа парать Петров юлташ.

Социализмлă ăмăртура колхозри пĕрремĕш бригада мала тухнă.

«Жнейка» колхоз председательне Петров юлташа çураки вăхăтĕнче ВКП(б) райкомĕ парти ретне илчĕ.

— ВКП(б) райкомне çуракине кĕске вăхăтра ирттерсе, тырăсене пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртме сăмах паратăп. Колхоза малти рете кăларассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлетĕп, — терĕ Петров юлташ партие кĕнĕ чухне. Халĕ ĕнтĕ панă сăмахсем ахаль пулманни куç умĕнчех. Колхоз 1944 çулхи кĕрхине иртнĕ çулхинчен 18 кун маларах туса ирттернĕ, тырпула 11 кун малтан вырса, авăна 28 кун малтан çапса пĕтернĕ, государствăна иргнĕ çулхипе танлаштарсан, 4 уйăх маларах тырă парса татнă.

Колхоза Петров юлташ ертсе пыма пуçланăранпа выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те чылай лайăхланчĕ. Кăçал ĕнесен йышне ӳстерес тесе, чылай пăрусем контрактациленĕ. Контрактациленĕ пăрусене пурне те пĕрлештернĕ. Колхоз государствăна сĕт-çу, çăмарта, аш-какай парса татнă.

Паянхи куна илсен, «Жнейка» колхоз кăçалхи ялхуçалăх çулне пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ. Çитес çул вăрлăх тума 60 пин штука кишĕр, 60 пин штука сахăр кăшманĕ подвала хунă.

Çитес çулхи плансем колхозăн питех те пысăк. Колхозниксем Услантăр çырми хĕррине сад тума палăртнă. Кунсăр пуçне колхоз правлени çурчĕпе фермăсенчи çурт-йĕрсене юсама строительство материалсем хатĕрлет.

«Жнейка» колхоза ертсе пырас ĕçре пултарулă çынсем ĕçлеççĕ. Колхозниксем вĕсене юратаççĕ, хисеплеççĕ. Кая юлнă колхоз вăрçă кунĕсенче мала тухма пултарни — колхозниксен ĕçлес туйăмĕ нумай ӳснинчен тата колхоз председателĕ Петров юлташ колхоз ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшнинчен килет. Çапла фронтовик Петров колхоз ĕçне тĕпренех юсарĕ.

С. ШАДИН. (Хамăр корр.).
КРАСНОАРМЕЙСКОЕ.

Шупашкарти халь уçăлнă электромеханически техникум çынсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет:

Техникумра икĕ отделени пур: кăнтăрлахи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахса вĕренмелле) тата каçхи отделени (унта производствăра ĕçлеме пăрахмасăрах вĕренмелле).

Техникумра виçĕ çул çурă вĕренмелле.

Техникум çакăн пек специалистсене вĕрентсе хатĕрлет: 1) метала сивĕлле касса ĕçлекен техник-технологсене тата 2) электричествăллă аппаратсем тăвакан техник-электриксене.

Техникума вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ. 7-мĕш класран отличник пулса вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

9-мĕш класран вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса илеççĕ.

10-мĕш класран вĕренсе тухнисене хăйне уйрăм группăна илеççĕ, унта икĕ çул вĕренмелле.

Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: а) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, б) автобиографи тата в) паспорт (ăна техникума пырсан кăтартмалла).

Студентсене рабочисен нормипе снабжени параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Ытти хуласенчен килнисене общежитие вырнаçтараççĕ.

Техникумăн каçхи отделенине те заявленисем йышăнаççĕ.

Заявленисене куллен ирхине 10 сехетпе 14 сехет хушшинче тата каçхине 18 сехетпе 21 сехет хушшинче техникум çуртĕнче йышăнаççĕ. Техникум адресĕ: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕ саслă кино механикĕсене вĕрентсе кăларакан Хусанти курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Курса 14 çултан çамрăк мар арçынсемпе хĕрсене, 5-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Заявленисене октябрĕн 30-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заявленисемпе пĕрле çакăн пек документсем ямалла: 1) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) сывлăх пирки панă справка.

Курсра 4 уйăх вĕренмелле. Ноябрĕн 5-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Курса илнисене, мĕнле вĕреннине кура, 140 тенкĕрен пуçласа стипенди параççĕ.

Апат тĕлĕшĕнчен курсра вĕренекенсене ремесло училищисенче вĕренекеннисемпе танлаштарнă.

Адрес: гор. Чебоксары, Кинотеатр. Тел. 5—64.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Кинофикаци управленийĕ.

2—1.

Шупашкарти кинотеатра дворник, к[illegible] гар, уборщицăсем тата сторожсем кир[illegible]

Росснабсбытăн Чăваш республикинчи [illegible]деленийĕ çакăн çинчен пĕлтерет: инв[illegible]ризаци тунă пирки, октябрĕн 25-мĕшĕ[illegible] пуçласа 29-мĕшне çитиччен складс[illegible] тавар памаççĕ.

Росснабсб[illegible]

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00761. Типография № 1, Управления полиграфпро мышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 ц. л. Тираж 16.000 экз.